28-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945 АПРЕЛЬ 14 ШАМАТКУН 71(6822) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Украинӑри 3-мӗш фронт ҫарӗсен командующине

Совет Союзӗн Маршалне ТОЛБУХИНА

Фронт штабӗн начальникне

Генерал-лейтенанта ИВАНОВА

УКРАИНӐРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем, УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем пулӑшнипе, урамсенче вӑйлӑ ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн, паян, апрелӗн 13-мӗшӗнче, Австри столицине ВЕНА хулине—нимӗҫсен оборонин Германин кӑнтӑр районӗсем патне пымалли ҫулсене хӳтӗлекен стратегиллӗ паха узелне — туртса илнӗ.

ВЕНА патне пымалли вырӑнсене тата ВЕНА хулине тытса илесшӗн ҫапӑҫнӑ вӑхӑтра, мартӑн 16-мӗшӗнчен пуҫласа апрелӗн 13-мӗшне ҫитиччен, фронт ҫарӗсем нимӗҫсен 11 танковӑй дивизине, ҫав шутра эсэсовецсен 6-мӗш танковӑй армине, аркатса тӑкнӑ, тӑшманӑн 130 пин салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ, 1.345 танкпа хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑ, 2.250 хир туппи тата ытти тӗрлӗ ҫар пурлӑхӗ нумай пӗтерсе тӑкнӑ е тытса илнӗ.

ВЕНА хулине туртса илесшӗн ҫапӑҫнӑ чухне ҫаксем чапа тухнӑ: ГЛАГОЛЕВ генерал-полковникӑн, ЗАХВАТАЕВ генерал-лейтенантӑн, ПЕТРУШЕВСКИЙ генерал-лейтенантӑн, ТИХОНОВ генерал-лейтенантӑн, УТВЕНКО генерал-лейтенантӑн, МИРОНОВ генерал-лейтенантӑн, БАХТИН генерал-лейтенантӑн, РУБАНЮК генерал-лейтенантӑн, ДЕРЕВЯНКО генерал-майорӑн, РОЖДЕСТВЕНСКИЙ генерал-майорӑн, БИРЮКОВ генерал-майорӑн, КОЗАК генерал-майорӑн, БОБРУК генерал-майорӑн, ШКОДУНОВИЧ генерал-майорӑн, АФОНИН генерал-майорӑн, ЦВЕТКОВ генерал-майорӑн, ПАНЧЕНКО генерал-майорӑн, ДЖАХУА генерал-майорӑн, МАКАРЕНКО генерал-майорӑн, БОГДАНОВ генерал-майорӑн, ДЕНИСЕНКО генерал-майорӑн, АФОНИН генерал-майорӑн, ДРЫЧКИН полковникӑн, ЧИЖОВ полковникӑн, КУКС полковникӑн, БРАНСБУРГ полковникӑн, ПАРФЕНОВ полковникӑн, ВИНДУШЕВ полковникӑн ҫарӗсем; Дунай ҫинчи Хӗрлӗ Ялавлӑ флотилин ХОЛОСТЯКОВ контр-адмирал, БАРБОТЬКО капитан-лейтенант, ВЕЛИКИЙ капитан-лейтенант ертсе пыракан карапӗсемпе чаҫӗсем; артиллери генерал-полковникӗн НЕДЕЛИНӐН, артиллери генерал-лейтенанчӗн ВОЗНЮКӐН, артиллери генерал-лейтенанчӗн НЕСТЕРУКӐН, артиллери генерал-майорӗн ЦИКАЛОН, артиллери генерал-майорӗн БРЕЖНЕВӐН, артиллери генерал-майорӗн ГУСЕВӐН, артиллери генерал-майорӗн РАТОВӐН, артиллери генерал-майорӗн ВЕЛИКОЛЕПОВӐН, артиллери генерал-майорӗн АЛЕКСЕЕНКОН, ФЕДОРОВ полковникӑн, ЕЛЕЦКИЙ полковникӑн, СЛЕПАКОВ полковникӑн, БОРИСЕНКО полковникӑн, ПЛЕШАКОВ полковникӑн, ЧЕРНОВ полковникӑн, ПРОХОРОВ полковникӑн, БУЛАХТИН полковникӑн, ЛЕОНОВ полковникӑн, ЛУПАНОВ полковникӑн, ЖИВУЦКИЙ подполковникӑн, ВОРОНОВ майорӑн, ГЛЕБОВ майорӑн артиллерисчӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-полковникӗн КРАВЧЕНКОН, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн ВОЛКОВӐН, РУССИЯНОВ генерал-лейтенантӑн, СВИРИДОВ генерал-лейтенантӑн, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн АХМАНОВӐН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ПАВЕЛКИНӐН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ШТРОМБЕРГӐН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн САВЕЛЬЕВӐН, ГОВОРУНЕНКО генерал-майорӑн, ТЯГЛОВ полковникӑн, БУДНИКОВ полковникӑн, РУМЯНЦЕВ полковникӑн, ОБДАЛЕНКОВ полковникӑн, ИВАНОВ полковникӑн, САХАРОВ полковникӑн, САВЕЛЬЕВ подполковникӑн, СИМАНЬ подполковникӑн танкисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн СУДЕЦӐН, авиаци генерал-полковникӗн ГОРЮНОВӐН, авиаци генерал-лейтенанчӗн ЗЛАТОЦВЕТОВӐН, авиаци генерал-лейтенанчӗн ТОЛСТИКОВӐН, авиаци генерал-лейтенанчӗн СЕЛЕЗНЕВӐН, авиаци генерал-лейтенанчӗн СТЕПИЧЕВӐН, авиаци генерал-лейтенанчӗн ПОДГОРНЫЙӐН, авиаци генерал-майорӗн КОРСАКОВӐН, авиаци генерал-майорӗн БЕЛИЦКИН, авиаци генерал-майорӗн ТИШЕНКОН, авиаци генерал-майорӗн КАМАНИНӐН, НЕДОСЕКИН полковникӑн, ДЕМЕНТЬЕВ полковникӑн, СМИРНОВ полковникӑн, ИВАНОВ полковникӑн, ТЕРЕХОВ полковникӑн, ШАТИЛИН подполковникӑн летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-полковникӗн КОТЛЯРӐН, МАЛОВ полковникӑн, ВОДОВАТОВ полковникӑн, ФАДЕЕВ полковникӑн, ПАВЛОВ полковникӑн, ЗАГРЕБИН полковникӑн, БАБУРИН полковникӑн, НОМИНАС полковникӑн, КОРНЕЕВ подполковникӑн, МАТУЗАС подполковникӑн, ГОЛУКОВИЧ подполковникӑн саперӗсем; ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн КОРОЛЕВӐН, авиаци генерал-майорӗн МОРОЗОВӐН, ШЕРВУД полковникӑн, КОТКОВ полковникӑн, ЕГОРОВ полковникӑн, СУХИХ подполковникӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве ялан лӑха палӑртса хӑварас тесе, ВЕНА хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене «ВЕНСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, апрелӗн 13-мӗшӗнче, 21 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, виҫҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм тӑватӑ хут пӗр харӑс персе, Украинӑри 3-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, ВЕНА хулине туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, ВЕНА хулине туртса илесшӗн ҫапӑҫнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи апрелӗн 13-мӗшӗ. № 334.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Украинӑри 2-мӗш фронт ҫарӗсен командующине

Совет Союзӗн Маршалне МАЛИНОВСКИЕ

Фронт штабӗн начальникне

Генерал-полковника ЗАХАРОВА

УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем, малалла тапӑнса пырса, паян, апрелӗн 13-мӗшӗнче, Чехословаки ҫӗрӗнче ГОДОНИН хулине — ҫулсен паха узелне тата нимӗҫсен МОРАВА шывӗн хӗвеланӑҫ хӗрринчи оборонин вӑйлӑн тӗреклетнӗ пунктне — туртса илнӗ.

ГОДОНИН хулине туртса илесшӗн ҫапӑҫнӑ чухне ҫаксем чапа тухнӑ: МАНАГАРОВ генерал-лейтенантӑн, ЯКОВЛЕВ генерал-майорӑн, ТЕРЕНТЬЕВ генерал-майорӑн, САФИУЛИН генерал-лейтенантӑн, ЗДАНОВИЧ генерал-майорӑн, ЕСИН генерал-майорӑн, ПРЕОБРАЖЕНСКИЙ генерал-майорӑн, ОГОРОДОВ генерал-майорӑн, ГУБАНОВ полковникӑн, СОБОЛЕВ полковникӑн ҫарӗсем; ПЛИЕВ генерал-лейтенантӑн, ПИЧУГИН генерал-майорӑн, КУЦ генерал-майорӑн, ПАВЛОВ генерал-майорӑн, БЕЛОУСОВ генерал-майорӑн, ХРУСТАЛЕВ генерал-майорӑн кавалерисчӗсем; артиллери генерал-майорӗн ПОПОВИЧӐН, ПОГОРЕЛЫЙ полковникӑн, МАРЧЕНКО полковникӑн, ПАСТУХ полковникӑн, ВЛАДИМИРОВ полковникӑн, ЗВОНАРЕНКО полковникӑн, КАЛИНИН подполковникӑн, ШУБНЫЙ полковникӑн артиллерисчӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн БОГДАНОВӐН, СУПЯН полковникӑн, АНТОНОВ подполковникӑн танкисчӗсем; авиаци генерал-лейтенанчӗн ПОДГОРНЫЙӐН, авиаци генерал-лейтенанчӗн СТЕПИЧЕВӐН, авиаци генерал-майорӗн КАМАНИНӐН летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ТУПИЧЕВӐН, ИСАЕВ полковникӑн, МЯСНИКОВ полковникӑн, БАДАЕВ подполковникӑн саперӗсем; МАКАРЕНКО полковникӑн, ШИШЕЛОВ майорӑн, государство хӑрушсӑрлӑх полковникӗн КАРПОВӐН связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве ялан лӑха палӑртса хӑварас тесе, ГОДОНИН хулине туртса илесшӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, апрелӗн 13-мӗшӗнче, 22 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, ҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа вуникӗ хут пӗр харӑс персе, Украинӑри 2-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, ГОДОНИН хулине туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, ГОДОНИН хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи апрелӗн 13-мӗшӗ. № 335.

Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен президенчӗ Франклин Рузвельт вилнӗ

ВАШИНГТОН, апрелӗн 12-мӗшӗ. (ТАСС). Паян, Гринвич вӑхӑчӗпе 20 сехет те 35 минутра, Уорм Спрингсра (Георги штачӗ) Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Президенчӗ Франклин Делано Рузвельт вилсе кайнӑ. Вал пуҫ мимине юн юхса тулнине пула вилнӗ.

ВАШИНГТОН, апрелӗн 12-мӗшӗ. (ТАСС). Шурӑ Ҫурт (Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Президенчӗн резиденцийӗ) ҫапла пӗлтернӗ: Рузвельта шӑматкун кӑнтӑрла иртсен Вашингтонра асӑнса чысласҫӗ. Пытарасса ӑна вырсарникун кӑнтӑрла иртсен Гайд-Паркра пытараҫҫӗ.

Шурӑ Ҫурт ҫапла калать: США вице-президентне Трумэна Шурӑ Ҫурта чӗннӗ те миссис Элеонора Рузвельт ӑна Рузвельт вилни ҫинчен пӗлтернӗ. Ҫавӑн ҫинчен государство секретарьне Стеттиниуса та пӗлтернӗ. Унтан кабинет ларӑвне пухнӑ.

Рузвельт вилни пирки

ЛОНДОН, апрелӗн 12-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентствин Вашингтонри корреспонденчӗ ҫапла пӗлтерет: президент Рузвельт вилнӗ пирки Шурӑ Ҫурт ҫинче ялава усӑнтарнӑ. Президент вилни ҫинчен калакан хыпар Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем тӑрӑх ҫиҫӗм пек хӑвӑрт сарӑлнӑ. Мӗнпур кинотеатрсенче сеанссем чарӑнса ларнӑ. Ҫынсем, хӑйсен килӗсенчен тухса, пӗр-пӗрне президент вилни ҫинчен хыпарланӑ.

Рузвельт вилни ҫинчен пӗлсен, вице-президент Трумэн ҫийӗнчех Шурӑ Ҫурта пынӑ. Конституци тӑрӑх, Трумэн президент вырӑнне никам уйӑрса лартмасӑрах йышӑнать.

Трумэн Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен президенчӗ вырӑнне йышӑннӑ

НЬЮ-ЙОРК, апрелӗн 12-мӗшӗ. (ТАСС). Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен вице-президенчӗ Гарри Трумэн хӑй Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен президенчӗ вырӑнне йышӑннӑ май верховнӑй суд председателӗ Стоун умӗнче присяга панӑ.

САРАТОВПА МУСКАВ ХУШШИНЧИ ГАЗОПРОВОД ВАЛЛИ ПЛАНРАН ИРТТЕРСЕ 500 ТОННА ТРУБА ТУНӐ

Челябинск хулинчи труба тӑвакансем Саратовпа Мускав хушшинчи газопровод валли трубасем тисе янӑ. Март уйӑхӗнче вӗсем планран иртторсе 500 тонна труба хатӗрленӗ. Халӗ заводра газопровод валли трубасем хӑвӑртрах туса хатӗрлесе ӑсатас тӗлӗшпе Май умӗнхи социализмлӑ ӑмӑрту анлӑн сарӑлнӑ. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровӗнчен

АПРЕЛӖН 12-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Апрелӗн 12-мӗшӗнче Чехословаки ҫӗрӗнче, БРАТИСЛАВӐРАН ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тата ҫурҫӗртерехре, УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем, СКАЛИЦА хулипе чугун ҫул станцине тата халӑх пурӑнакан ытти 30 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра—ТРЕНЧ ТЕПЛА, ОПАТОВА, КОХАНОВЦЕ, ГАЛУЗИЦЕ, ГОРНЫБЗИНЦЕ, ВРБОВЦЕ, РАДЕЙОВ, КАТОВ, ГОЛИЧ, КОПЧАНИ ятлӑ пысӑк ялсем. ВЕНӐРАН ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре фронт ҫарӗсем Австри ҫӗрӗнче ДРЕЗИНГ, ЕДЕНШПАЙГЕН, ЛОЙДЕСТАЛЬ, ЭРДПРЕС, ХОХЕНРУППЕРСДОРФ, АУЭРШТАЛЬ БОКФЛИС, АДЕРКЛАА, РААСДОРФ, ЭССЛИНГ, ГРОСС ЭНЦЕРСДОРФ ялӗсене тата ЗЙБЕСБРУННХ чугун ҫул станцине туртса илнӗ, ҫапла вара, ВЕНА хулипе БРНО хули хушшинчи чугун ҫулпа шоссе ҫулне татнӑ.

ВЕНӐРА УКРАИНӐРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем хулан Дунай каналӗпе ДУНАЙ шывӗ хушшинчи районӗн урамӗсенче ҫапӑҫнӑ, 60 квартал ытла туртса илнӗ. СОМБАТЕЛЬ хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре фронт ҫарӗсем ҫаплах малалла тапӑнса пынӑ. Австри ҫӗрӗнче ГЮССИНГ (НЕМЕТУЙВАР) хулине тата халӑх пурӑнакан ытти 40 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра—МАРКТ АЛЛАУ, ОЛБЕНДОРФ, ОБЕР-НЕЙБЕРГ, МИХЕЛЬ, ЧАНШЕНДОРФ, ШТЕЙНГРАБЕН, ЕЛЬТЕНДОРФ ятлӑ пысӑк ялсем. Апрелӗн 11-мӗшӗнче пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче фронт ҫарӗсем тӑшманӑн 5.000 салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ тата ҫакӑн пек трофейсем тытса илнӗ: танксемпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑсем—34, бронетранспортерсем—38, хир тупписем—208, пулеметсем—270, автомашинӑсем—498, тракторсемпе тягачсем—187, паровозсем—34, чугун ҫул вагонӗсем 1.535, ҫар пурлӑхӗн склачӗсем — 17.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

Апрелӗн 11-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 50 танкӗпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен туппине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 22 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

ХӖРЛӖ ЯЛАВЛӐ БАЛТИКА ФЛОЧӖН АВИАЦИЙӖ ТӐШМАН КАРАПӖСЕМПЕ ТРАНСПОРЧӖСЕНЕ ПЫРА-ПЫРА ҪАПНИ

Апрелӗн 9-мӗшӗпе 10-мӗшӗнче Хӗрлӗ Ялавлӑ Балтика флочӗн авиацийӗ Пиллау портӗнче тата уҫӑ тинӗсре (Пиллауран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре) тӑшман карапӗсемпе транспорчӗсене пыра-пыра ҫапнӑ. Ҫапла пырса ҫапнипе нимӗҫсен 2 миноносецне, хуралта ҫӳрекен 2 карапне, пӗтӗмӗшпе 60.000 тонна таякан 10 транспортне тата 2.000 тонна таякан танкерне шыва путарнӑ. Унсӑр пуҫне, бомбӑсем тӳрех пырса тивсе, тӑшманӑн пӗр миноносецне, хуралта ҫӳрекен пӗр карапне тата 7 транспортне сиенленӗ.

ВАШИНГТОН

Трумэн президента

Рузвельт президент вилнӗ пирки питӗ хурлантӑм. Вӑл ССР Союзӗ ҫине туслӑн пӑхнине тата вӑл пӗтӗмӗшлӗ тӑшмана хирӗҫ пыракан кӗрешӳре демократиллӗ ҫӗршывсен боевой союзне пӗр улшӑнмасӑр ҫирӗплетсе пыма тӑрӑшнине совет халӑхӗ яланах пысӑка хурса хакланӑ. Сирӗн йывӑр сухатӑвӑра эпӗ пӗтӗм чун-чӗререн туйса тӑни ҫинчен пӗлтернине йышӑнӑр.

Михаил КАЛИНИН.

ВАШИНГТОН

Трумэн президента

Рузвельт президент вӑхӑтсӑр вилнӗ пирки Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Правительствине Совет Правительстви тата эпӗ хам тарӑннӑн хурланни ҫинчен пӗлтеретӗп. Америка халӑхӗ тата Пӗрлешнӗ Нацисем, Франклин Рузвельт вилнине пула, пӗтӗм тӗнчешӗн паллӑ пулса тӑракан аслӑ политика ҫыннине тата вӑрҫӑ хыҫҫӑн мирпе хӑрушсӑрлӑха организацилесе ӗҫе хавхалантарса пыракана ҫухатрӗҫ.

Совет Союзӗн Правительстви Америка халӑхне унӑн йывӑр сухатӑвӗ пирки пӗтӗм чун-чӗререн хурланни ҫинчен тата пӗтӗмӗшлӗ тӑшмана хирӗҫ пыракан вӑрҫӑн тӗп йывӑрлӑхне хӑйсем ҫине илнӗ аслӑ державӑсем хушшинчи туслӑх политики малашне те тӗреклене пырассине ҫирӗп шанса тӑни ҫинчен пӗлтерет.

И. СТАЛИН.

ВАШИНГТОН

Элеонора Рузвельта

Сирӗн упӑшкӑр вилнӗ пирки эпӗ пӗтӗм чун-чӗререн хурланни ҫинчен тата Сирӗн йывӑр хуйхӑра эпӗ хам туйса тӑни ҫинчен пӗлтернине йышӑнӑр. Рузвельт президента совет халӑхӗ, ирӗклӗхе юрата кан халӑхсем пӗтӗмӗшле тӑшмана хирӗҫ туса пыракан кӗрешӗвӗн аслӑ организаторӗ тата пӗтӗм тӗнчере хӑрушсӑрлӑх туса хурас ӗҫӗн руководителӗ вырӑнне хурса, пысӑккӑн хакланӑ.

И. СТАЛИН.

ВАШИНГТОН

Государство секретарьне Стеттиниуса

Рузвельт президент вилнӗ пирки эпӗ пӗтӗм чун-чӗререн хурланни ҫинчен пӗлтернине йышӑнӑр. Ҫакӑ вӑл Америка халӑхӗшӗн кӑна мар, мӗнпур Пӗрлешнӗ Нацисемшӗн те пысӑк сухату пулса тӑрать. Пирӗн пӗтӗмӗшлӗ тӑшмана ҫапса аркатассине организацилес ӗҫре вӑл мӗн тери пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнине тата вӑл пулас мирпе халӑхсен хӑрушсӑрлӑхӗшӗн ҫав тери тимлӗн тӑрӑшнине Пӗрлешнӗ Нацисем лайӑх пӗлеҫҫӗ. Франклин Рузвельт Совет Союзӗпе Америка хушшинчи туслӑха ҫирӗплетес тӗлӗшпе мӗн тери нумай ӗҫ тунине совет халӑхӗ яланах асра тытса тӑрӗ.

В. МОЛОТОВ.

Совет Правительстви хурланса пӗлтерни

Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен президенчӗ Рузвельт вилни ҫинчен калакан хыпара илнӗ хыҫҫӑн ҫӗрле, СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов США посолӗ Гарриман господин патне пынӑ та ӑна Рузвельт президент вилнӗ пирки Совет правительстви тата хӑй тарӑннӑн хурланни ҫинчен пӗлтернӗ. (ТАСС).

Куллен кирлӗ таварсен паха лӑхӗ ҫинчен

РСФСР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ куллен кирлӗ таварсен пахалӑхне лайӑхлатмалли ҫинчен постановлени йышӑннӑ. Вырӑнти промышленность предприятийӗсене, промысла артелӗсене тата инвалидсен кооперацийӗн артелӗсене продукцине марка лартмасӑр предприятирен е артельтен кӑларса яма чарнӑ. Куллен кирлӗ таварсен пахалӑхӗ ятарласа уйӑрнӑ комиссисем кӑтартса панӑ техникӑллӑ условисемпе тата продукци тӗслӗхӗсемпе пӗтӗмпех килӗшсе тӑмалла. Ҫав комиссисене облисполкомӑн, крайисполкомӑн, автономиллӗ республикӑн совнаркомӗн председателӗ тата промышленноҫпа сутуилӳ организацийӗсен представителӗсем кӗмелле.

Сывлӑхпа ҫыхӑнса тӑракан продукцисене (апат-ҫимӗҫ продукчӗсене, пит-куҫа илемлетмелли сӑрсене, кухньӑри савӑт-сапана тата ыттисене те) тумалли техникӑлла условисене тата ҫав япаласен тӗслӗхӗсене обязательнӑй йӗркепе санитари инспекцийӗпе килӗштерсе тумалла.

Предприятисемпе артельсене продукци пахалӑхӗшӗн ответлӑ пулса тӑракан отделсем тума е уйрӑм ҫынсем уйӑрса лартма хушнӑ. Суту-илӳ организацийӗсем ҫав ҫирӗплетнӗ техникӑлла условисемпе тата тӗслӗхсемпе килӗшсе тӑман таварсене сутма илме пултараймаҫҫӗ. (ТАСС).

Югослави Министрӗсен Совечӗн Председателӗ И. Броз-Тито Маршал Мускавра пурӑнни ҫинчен

Югослави Министрӗсен Совечӗн Мускава килнӗ Председателӗ И. Броз-Тито Маршал апрелӗн 12-мӗшӗнче Хӗрлӗ Ҫарӑн Центральнӑй Ҫуртӗнче красноармеец юррисемпе ташшисен Хӗрлӗ Ялавлӑ ансамблӗн концертӗнче пулнӑ, концерта СССР Халӑх артисчӗ А. В. Александров профессор ертсе пынӑ.

Хӗрлӗ Ҫарӑн Центральнӑй Ҫурчӗн Хӗрлӗ Ялавлӑ залӗнче ҫаксем пулнӑ: СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председатель Заместителӗ тата СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов, А. Н. Косыгин, Б. Л. Ванников, Д. Ф. Устинов, П. Ф. Ломако, авиаци Маршалӗ Ф. Я. Фалалеев, авиаци Маршалӗ Г. А. Ворожейкин, Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗн Заместителӗсем А. Я. Вышинский, С. А. Лозовский, С. И. Кавтарадзе, И. М. Майский, Совет Союзӗн Югославири Посолӗ И. В. Садчиков, РСФСР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ А. И. Лаврентьев, Ф. И. Голиков генерал-полковник, Ф. Ф. Кузнецов генерал-полковник, авиаци генерал-полковникӗ Н. С. Шиманов, Мускав хули коменданчӗ К. Р. Синилов генерал-лейтенант, ют ҫӗршывсен посолӗсем, посланникӗсем, ӗҫ поверенннӑйӗсем, СССР Наркоминделӗн, СССР Оборона Халӑх Комиссариачӗн, Тинӗс-Ҫар Флочӗн Халӑх Комиссариачӗн ответлӑ сотрудникӗсем, художниксем, артистсем, писательсем, совет пичечӗпе ют ҫӗршывсен пичечӗн представителӗсем.

И. Броз-Тито Маршалпа пӗрле Черногори Ӗҫӗсен Министрӗ М. Джилас генерал-лейтенант, Суту-илӳпе Снабжени Министрӗ Н. Петрович господин, Сӑрт-ту Промышленность Министрӗ Б. Андреев господин, Югославин Совет Союзӗнчи Ҫар Миссийӗн Начальникӗ Р. Приморац генерал-лейтенант.

Концерт пуҫланас умӗн Югославин тата Совет Союзӗн государство гимнӗсене каланӑ. Концертра пулнисем И. Броз-Тито Маршала тата В. М. Молотова нумайччен алӑ ҫупса кӗтсе илнӗ. (ТАСС).

Чӑваш АССР Совнаркомӗнче

Чӑваш республикинчи районсемпе хуласенчи промкомбинатсен, апат-ҫимӗҫ комбиначӗсен тата пурӑнмалли ҫуртйӗр хуҫалӑх предприятийӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн 1945 ҫулхи март уйӑхӗнчи итогӗсем ҫинчен

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ, республика районӗсемпе хулисенчи промкомбинатсен, апат-ҫимӗҫ комбиначӗсен тата пурӑнмалли ҫуртйӗр хуҫалӑх предприятийӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн ҫак ҫулхи март уйӑхӗнчи итогӗсене пӑхса тухса, ӑмӑртура ҫаксем мала тухнине палӑртнӑ:

Промкомбинатсем енӗпе:

Куславкка районӗнчи промкомбинат (управляющийӗ Ефимов юлташ, райсовет исполкомӗн председателӗ Прытченков юлташ) пӗтӗм продукци туса кӑлармалли плана 125,8 процент, ӗҫсыннисем валли куллен кирлӗ таварсем туса кӑлармалли плана 104,5 процент тултарнӑ. Ана Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне тата 15.000 тенкӗ премп пама йышӑннӑ.

Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи промкомбинат (управляющийӗ Питин юлташ, райсовет исполкомӗн председателӗ Маклашкин юлташ) пӗтӗм продукци туса кӑлармалли плана 103,4 процент, ӗҫсыннисем валли куллен кирлӗ таварсем туса кӑлармалли плана 125,7 процент тултарнӑ. Ана 5.000 тенкӗ премп памалла тунӑ.

Март уйӑхӗнче Вӑрнар, Иплей, Комсомольски, Пӑрачкав, Шӑхасан, Етӗрне районӗсенчи тата Канаш хулинчи промкомбинатсем лайӑх ӗҫленине палӑртнӑ.

Апат-ҫимӗҫ комбиначӗсем енӗпе:

Канаш хулинчи апат-ҫимӗҫ комбиначӗ (директорӗ Захватова юлташ, хула Совет исполкомӗн председателӗ Кизилов юлташ) пӗтӗм продукци туса кӑлармалли плана 233,3 процент тултарнӑ, февраль уйӑхӗнчипе танлаштарсан, 23,6 процент чухлӗ продукци ытларах туса кӑларнӑ. Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне ҫак комбинатрах хӑварма, ӑна 6.000 тенкӗ премп пама йышӑннӑ.

Март уйӑхӗнче Улатӑр, Элӗк, Сӗнтӗр тата Йӗпреҫ районӗсенчи апат-ҫимӗҫ комбиначӗсем лайӑх ӗҫленине палӑртнӑ.

Пурӑнмалли ҫуртйӗр хуҫалӑх предприятийӗсем енӗпе:

Шупашкарти гостиницӑна (директорӗ Додонова юлташ) Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне тата 5.000 тенкӗ премп пама йышӑннӑ.

Шупашкарти коммунальнӑй мунчана (директорӗ Костина юлташ) 3.000 тенкӗ премп памалла тунӑ.

Ҫӗмӗрлери гостиницӑна (директорӗ Анишкова юлташ) 2.000 тенкӗ премп панӑ.

В. В. Маяковский

(Вилнĕренпе 15 çул тултарнă май)

Вуннилĕк çул каярах Владимир Маяковскин кĕрўллĕ чĕри тапма чарăнчĕ. Анчах унăн поэзийĕн çав тери писĕк хăвачĕ çулсем иртсе пынă май пĕрре те йăвашланмарĕ. Унăн сăввисем чи пысăк тĕрĕслеве—вăхăт тĕрĕслевне тўссе иртгерчĕç. Поэт-патриотăн произведенийĕсем пирĕн шухăш-кăмăла паян кун та хавхалантарса тăраççĕ.


Поэтăн биографине унăн обществăллă биографийĕнчен, çĕршыв пурнăçĕнчен уйăрма çук. Владимир Маяковский 1893 çулта çуралнă. 1909 çулта çырма тытăннă. Маяковский хăй çырнă произведенисен вунă пайĕнчен тăхăр пайне совет влаçĕн çулĕсенче çырнă. Вăл хамăр Тăван çĕршывпа, Советсен Республикипе пĕрле вăй пухса, паттăрланса пынă. Вăл Тăван çĕршыва пĕтĕм чун-чĕререн юратнă, хăйĕн чи хĕрўллĕ те ăшă сăмахĕсене Тăван çĕршыва пехилленĕ. «Манăн пысăк анне—манăн республика», — тесе чĕннĕ вăл Тăван çĕршыва.

«Çамрăклăх çĕршывĕ» уншăн çав тери хаклă пулнă, вăл савăнăçне те, хуйăхне те, сиввине те, вĕçлăхне те çĕршывпа пĕрле тўссе ирттернĕ.

Хăйĕн поэтне пăхса çитĕнтернĕ халăх ăна вырăс çыннин чи паха шухăш-кăмăлĕсене пехилленĕ,—халăх ăна аслă та пысăк чун, анлă шухăш, паттăр та шанчăклă чĕре, ырă кăмăл, шухăш гўрĕлĕхĕне оптимизм панă. Вырăс литературин напиллĕ чи паха традицийĕсем—халăхшăн ĕçлесси тата пысăк идейăлăх — Маяковскин творчествинче тарăнăн паларса тăраççĕ.

Маяковский искусствăри чăн-чăн революционерăн, çĕнĕ çулйĕр хывакан йывăр çулне утса тухнă. Октябрьти революцие поэт хăйĕн хăватлă маршĕсемпе саламланă. Революци унăн творчествине çĕнĕ тавракурăм уçса панă. Маяковский революцие малтан пуçласах пĕр иккĕленмесĕр йышăннă та хăйĕн юлашки кунĕ çитиччченех революци ялавне мухтавласа юрланă. Общество пурнăçĕнчи пĕр событи те унăн сăввисенче палăрмасăр юлман. Вăл хăйне «телей шăратса кăларакан завод пек туйнă». Вăл—поэтăн хаяха ертсе пыракан çын тата унăн тарçи пулмалла, тесе шутланă. «Революци чĕнсе мобилизациленĕ» Маяковский, чăнчăн халăх тарçи пулса, РОСТА-ра ĕçленĕ, граждăн вăрçи çулĕсенче пирĕн çĕршыва тăшманĕсене хаярран питлекен плакатсем çырнă, хăйĕн поэзийĕн летопиçĕнче пирĕн çамрăк совет государствин историйĕн чаплă страницисене çырса хăварнă. Искусство хакне вăл хăйĕн поэзийĕ обществăна мĕнле усă кўнине шута илсе виçнĕ.

Маяковскин творчествинче ленинизм идейисем тарăнăн палăрса тăраççĕ. Вăл Ленин çинчен çав тери вăйлă поэма çырнă, совет искусствинче çулпуç çинчен çырнă ун пек вăйлă произведени урăх çук та темелле. Çав поэма «çĕр тăрăх утса иртнĕ этемсенчен чи этемлерех этем çинчен» çырнă поэма кăна мар пулса тăрать. Çав поэма этемлĕхе ирĕке кăларакан çын çинчен çырнă поэма кăна та мар. Маяковскин Ленин çинчен çырнă поэми вăл—парти çинчен, революци çинчен çырнă поэма пулса тăрать. Çулпуçăн сăнарĕ партипе, халăхпа таччăн çыхăннă: «Эпир калатпăр—Ленин, шухăшлатпăр—парти, эпир калатпăр — парти, шухăшлатпăр—Ленин», тенĕ вăл. Поэма пикĕсне рабочи класс хăйне ирĕке кăларассишĕн кĕрешнин историне хывнă. Историре пулса иртнĕ кашни татăклă



савăрну çинчен поэма Ленин чĕлхипе каласа парать. Маяковскин ленинизм вилĕмсĕрлĕхне çирĕплетекен произведенийĕ халăхсен аслă çулпуçне асăнса хывнă чи паха литература памятникĕ пулса тăрать. Акă мĕншĕн ĕнтĕ В. Куйбышев Маяковскине пысăк ăнăçу тунă ятпа ырă сунса саламланă. Акă мĕншĕн ĕнтĕ 1924 çулта Маяковский хăйĕн поэмине вуласа панине Мускав хулинчи парти активĕ çав тери ăшшăн кĕтсе илнĕ. 1930 çулхи январĕн 21-мĕшĕнче, Пысăк Театрти хурлăхлă ларура хăйĕн поэмине юлашки хут вуланă чухне, Владимир Маяковскине Сталин саламласа алă çупнă.

Поэмăна çавăн пек хаклани Маяковскишĕн чи пысăк награда пулнă. «Çакă вăл манăн чи ответлă выступлени пулчĕ»,—тенĕ Маяковский. Поэт хăйĕн талантчĕпе рабочи класшăн, большевиксен партийĕшĕн ĕçленĕ. Вăл Тăван çĕршывпа халăхшăн çав тери нумай ĕç тума ĕмĕтленнĕ. Поэт ĕçĕ çинчен, хурçăпа чугун шăратса кăларнине кăтартакан цифрăсемпе пĕрлех, съезд умĕнче Сталин доклад туса памалла пултăр, тесе ĕмĕтленнĕ вăл. Сталин Маяковскине пысăка хурса хакланă, вăл ăна «пирĕн совет саманинчи чи лайăх та талантлă поэт» тенĕ.

Маяковскин поэзийĕ вырăс литературинче хăйне май сăмана пулса тăчĕ. Поэт вырăс литературинче Пушкинпа Лев Толстойăн, Максим Горькин реалистла аслă традицийĕсене малалла аталантарса пыраканĕ пулнă.

Маяковскин произведенийĕсем тăрăх пулас ăрусем пирĕн саманана вĕренĕç. Маяковскин сăввисем пирĕн Тăван çĕршыв историне поэзире чаплăн кăтартса параççĕ. Маяковский аслă поэтăн куçĕпе ыранхи куна, малашлăха курма пĕлнĕ. Вăл «аслă çĕр çинче коммуна сурчĕсем ўснине» курнă.

Совет çыннисен кулленхи калаçăвĕсенчех вăл совет патриотизмĕн хăватлă вăйне туйса тăнă, социализм саманинчи çĕнĕ çынна, коммунизм тăвакан çынна курнă. Маяковский хăйĕн çĕршывĕнчи çутçанталăкпа, хăйĕн çĕршывĕпе тивĕçлипе мухтанса хĕпĕртенĕ. Анчах вăл аякран пăхса тăракан çын пулман, вăл çĕршывăн ĕçне активлăн хутшăннă.

Вăл пĕтĕм тĕнчери событисене тимлĕн сăнаса пынă, мобилизаци тĕлĕшĕнчен хатĕр тăма чĕннĕ. «Токарь, шахтер, газетчик, врач тата химик, пурте оборонăна тĕреклетсе пырăр!»—тесе асăрхаттарнă Маяковский. Вăл совет государствин оборонине тĕреклетме пулăшнă. Ахальтен мар вăл хăйĕн «Во весь голос»

ятлă поэмиче хăй сăввисене хĕçпăшаллă çарсемпе танлаштарать. Çавăн пек сăнлăхсем унăн малтанхи сăввисенче те пулнă. Маяковский пĕтĕм тĕнчери çĕнĕ вăрçа чĕртме хатĕрленекенсем пуррине, пирĕн тăшманпа вăрçмалла пуласине кăтартса панă. Çав тăшмансем хушшинче поэт-патриот куçĕ умне чи хăрушă та ултавлă тăшман—фашизм тухса тăнă. Фашизма хирĕçле тема поэт творчествинче тивĕçлипех чи кирлĕ тема пулса тăнă.

«Фашистсен пуклак сăмсине» Маяковский малтанхи хут 1923 çултах хăватлăн пырса çапнă. Совет дипломачĕсене фашистла террористсем тапăннине хирĕç вăл хаяррăн ответленĕ. «Маяковская галлерея» ятлă серие кĕртнĕ çав памфлетсенче общество аталанăвĕн историллĕ-прогрессиллĕ вăйĕсене хирĕç тăракан фашизмăн тискер сăн-сăпатне вăл уççăн кăтартнă. Ют çĕршывсене кайса çўренĕ чухне хăй куçĕпе курнисене Маяковский чылай сăвăсенче кăтартса панă («Наглядное пособие», «В мировом масштабе» тата ытти сем те). Асăннă сăвăсенчен пĕрремĕшĕнче Маяковский совет халăхĕ тата пĕтĕм малта пыракан этемлĕх фашизм çине мĕнле пăхнине çав тери тĕрĕс çырса палăртнă:

Çĕр чăмăрĕн
    пур кĕтесĕсенче те
Рабочисен лозунгĕ
    çапла:
Калаç фашистсемпе
    пĕр чĕлхепе—
Пушарсен чĕлхипе,
    пульăсен сăмахĕпе,
    шĕвĕр штык вĕçĕпе.

Маяковский хăрушлăх çинчен асăрхаттарнă кăна мар, вăл фашистсем Совет Союзĕ çине тапăнас хăрушлăха уççăн курса тăнă. Çавăн çинчен вăл 1925 çулта çырнă «Вĕçекен пролетари» ятлă поэмăра калать. Вăл хăватлă сывлăшçар флочĕ тăвасси çинчен нумай сăвăсем çырать.

Çўлте асăннă «Вĕçекен пролетари» поэмăна халĕ вулатăн та, ăна 20 çул каярах çырнине ĕненме те хĕн. Ăна ĕнер çеç çырнă пек туйăнать, мĕншĕн тесен унта кучухнехи вăрçăн тапхăрĕсене çав тери тĕрĕс кăтартса панă. «Тапăну» ятлă сыпăкра фашистсем пирĕн çĕршыва вăрă пек ултавлăн тапăнса кĕнине, вĕсем çавăн пек кĕтмен çĕртен тапăннине пула вăхăтлăха ăнăçусем тунине, вĕсем Мускав патне çывхарса килнине тата совет çарĕсен йывăр лару-тăруне кăтартса панă. Малашнехи сыпăксенче вара совет халăхĕ, хăйĕн хăватлă вăйĕсене пухса, тăшмана сирсе пăрахнине тата çапса аркатнине, тăшманăн вăрçă машинине пĕтерсе тăкнине, фашизма хирĕç пыракан кĕрешўрен совет халăхĕ çĕнтерўпе тухнине кăтартса панă.

Халĕ, совет халăхĕ фашистла нимĕç захватчикĕсене «аслатиллĕ çапăçусенче» аркатса пынă чухне, поэт-патриот Владимир Маяковский пирĕн Тăван çĕршыври çĕнтерўллĕ халăхăн малти речĕсенче пырать.

Поэт сасси окопсемпе землянкăсенче, фронт хаçачĕсенче, çар завочĕсен цехĕсенче кĕрлесе тăрать. Халĕ, халăхсене ирĕке кăларассишĕн çапăçакан паттăр совет çарĕсене саламласа Мускав салючĕсем кĕрленĕ чухне, эпир Маяковскин мăнаçлă сăмахĕсене аса илетпĕр: «Хĕрлĕ Çар—пирĕн вăй. Хамăрăн Хĕрлĕ Çара—мухтав!».

Г. ЛЬВОВ.

Франклин Делано Рузвельт

(СПРАВКА)

Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсен апрелĕн 12-мĕшĕнче вилсе кайнă президенчĕ Франклин Делано Рузвельт американецсен пĕтĕм çĕршыв историйĕнчи чи пысăк та паллă политика деятелĕсенчен пĕри пулнă.

Рузвельт 1882 çулхи январĕн 30 мĕшĕнче Гайд-Паркра, Нью-Йорк штатĕнче çуралнă. 1904 çулта вăл—Гарвард университетĕнчен, 1907 çулта — Колумби университетĕнчен вĕренсе тухнă та Нью-Йоркра юрист пулса ĕçленĕ. 1907 çултан пуçласа Рузвельт—демократиллĕ партин активлă членĕ. 1910 çулта Рузвельта Нью-Йорк штатĕнчен сената суйланă. Пĕтĕм тĕнчери пĕррремĕш вăрçă пуçланас умĕн Рузвельт Вильсон президентпа паллашнă та унăн чи çывăх помощникĕсенчен пĕри пулса тăнă. 1913 çултан пуçласа 1920 çула çитиччен Рузвельт США тинĕс министрĕн помощникĕ пулнă. Çав вырăнта тăрса, Рузвельт пĕтĕм тĕнчери пĕррремĕш вăрçă вăхăтĕнче Америкăн çар флотне аслăлатас тата урăхлатса йĕркелес тĕлĕшпе питĕ активлăн ĕçленĕ. Тинĕс ыйтăвĕсем тĕлĕшпе Рузвельт паллă авторитет пулса тăнă. Иртнĕ вăрçă вăхăтĕнче Норвегирен пуçласа Çурçĕр Шотландие çитиччен минăсем лартса тухас ĕçре Рузвельт нумай вăй хурса ĕçленĕ. Тинĕс министрĕн помощникĕ пулса ĕçленĕ Рузвельт вăрçă уйхирне, уйрăмăн илсен Италие, кайса çўренĕ.

Пĕтĕм тĕнчери пĕррремĕш вăрçă хыççăн Рузвельт, Вильсонпа пĕрле, США-на Нацисен лигине кĕртессишĕн çине тăрса кĕрешнĕ. Вильсон поражени тўссен, Рузвельт хăйĕн килти ĕçĕсене туса пыма тытăннă.

1929 çулта Рузвельта Нью-Йорк штачĕн губернаторĕ пулма суйлаççĕ. Нью-Йорк штачĕн губернаторĕ пулса ĕçлесе, Рузвельт халăха йўнĕ электроэнерги парас, монополисем пуç пулса тăнине хирĕç кĕрешес, социальнăй страховани ĕçне вăйлатас тата ытти ĕçсене пурнăçлас тĕлĕшпе прогрессиллĕ чылай паха мероприятисем туса ирттернĕ. 1932 çулта Рузвельта США президентне суйланă. Пĕтĕм тĕнчери экономикăллă кризис вăхăтĕнче Рузвельт монополисен вăйне чакарас тата анлă халăх массисен пурнăç условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе «çĕнĕ çулйĕре» пурнăçа кĕртсе пынă. Çав политикăшăн Рузвельта Америка халăхĕ пысăк хисепе хурса юратма тытăннă тата çавăнпа пĕрлех реакциллĕ ушкăнсем ăна хирĕç активлăн кĕрешме пуçланă. 1936 çулта Рузвельта çĕнĕрен США президентне суйланă. 1940 çулта, США-ра çирĕпленнĕ йĕркесене пăхмасăрах, Рузвельта президент пулма виççĕмĕш хут суйланă. Гитлеризмпа фашистла агрессие хирĕç Рузвельт çирĕп позици йышăннă. Америка халăхĕн прогрессиллĕ пур сийĕсем те Рузвельтăн тулашри политикине ырланă. 1932 çулта президента суйланă хыççăн Рузвельт туса ирттернĕ чи малтанхи ĕçсенчен пĕри вăл—1933 çулта ССР Союзĕпе йĕркеллĕ дипломатиллĕ çыхăнусем тытма пуçлани пулнă.

Германи Совет Союзĕ çине ултавлăн тапăннă хыççăнах Рузвельт ССР Союзĕ çине Америка халăхĕ кăмăлласа пăхни çинчен пĕлтернĕ. Совет Союзне хĕçпăшалпа материалсем тăратас тĕлĕшпе США-па ССР Союзĕ хушшинче практикăллă ĕçсем туса ирттермелли килĕшўсене тунă.

Рузвельт хăйĕн сăмахĕсенче Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсем гитлеризмпа агрессие татăклăн пĕтерес ĕçе хăйсен пĕтĕм вăйне хума хатĕр тăни çинчен пĕр хутчен мар туха-туха каланă.

1944 çулта демократиллĕ парти Рузвельт кандидатурине çĕнĕрен президента суйлама тăратнă. Çапла Рузвельта США президенчĕ пулма тăваттăмĕш хут суйланă. Тулашри политика ыйтăвĕсем вăрçа çĕнтерўпе пĕтерес, Пĕрлешнĕ Нацисем хушшинчи туслăха малалла çирĕплетес ыйтусем суйлав кампанине иртерес ĕçĕн тĕп ыйтăвĕсем пулса тăнă. Суйлав умĕн тухса каланă хăйĕн сăмахĕсенчен пĕринче Рузвельт çапла пĕлтернĕ: «Вăрçăра çĕнтерў тăвассишĕн пыракан кĕрешўре кăна мар, вăрçă хыççăн пĕтĕмĕшле мир никĕсне хывас тата çав мире упраса тăрас ĕçре те Америка халăхĕ Российăн паттăр халăхĕпе пĕрле пулнишĕн мухтанса хĕпĕртет», тенĕ. Суйлавсенче Рузвельт çĕнтернине Америка халăхĕ кăна мар, ирĕклĕхе юратакан пур халăхсем те ырласа саламланă.

Океан леш енчи аслă демократин руководителĕ пулса тăрса, Рузвельт виçĕ аслă держава руководителĕсен 1943 çулта Тегеранра пулса иртнĕ тата 1945 çулта Крымра пулса иртнĕ конференцийĕсен ĕçне хутшăннă. Рузвельтăн прогрессиллĕ шухăшĕсем, вăл фашистла агрессие курайманни тата вăл малашнехи миршĕн хăрушсăрлăх туса хума тăрăшни çав историллĕ конференцисенче ăнăçу тума сахал мар пулăшнă.

Рузвельт кĕтмен çĕртен вилнишĕн ирĕклĕхе юратакан мĕнпур çĕршывсенчи халăхсем хурланĕç.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, апрелĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерўре çапла каланă: союзниксен çарĕсем Вестфалире, Иссель шывĕ урлă каçса, наступлени пуçласа янă. Оснабрюкран çурçĕртерехре союзниксен Брамше хулине йышăннă. Бремен хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем Гарпштедт хулине йышăннă. Ку районтан хĕвелтухăçнерехре тăшман вăйлăн хирĕç тăрса çапăçать.

Союзниксен бронетанковăй чаçĕсем, хĕвелтухăçнелле 80 километр ытла куçса, Брауншвейг хулинчен кăнтăртарахри Вольфенбюттель хулине пкĕ енчен те хĕстерсе лартнă та Магдебург хули районĕнче Эльба шывĕ хĕррине тухнă. Союзниксен пехота чаçĕсем Гальберштадт хулин тавраш ĕнче малалла хăвăрт куçса пыраççĕ.

Дудерштадтран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре союзниксем Остерхаген хулине йышăннă. Союзниксен танковăй чаçĕсем Нордгаузен хулине тăшмантан тасатнă хыççăн Мюльхаузен хулинчен хĕвелтухăçнерехри Бильцингслебен хули патне çитнĕ. Малалла 35 километр куçсан, çав районтан кăнтăр-хĕвеланăçнерехри Келледа хули патне çитесси пĕр километр çурă юлнă.

Кобург хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, тăшманăн уйрăм чаçĕсем хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, союзниксем пăртак малалла кайнă.

Союзниксем Швейнфурт хулине пырса кĕнĕ, ăна малтан çавăрса илнĕ пулнă. Хула урамĕсенче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Союзниксен танковăй чаçĕсем Майн шывĕ тăрăх хĕвелтухăçнелле тата кăнтăралла куçнă. Çав районтан кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем Оксенфуртпа Ансбах хулисене çыхăнтарса тăракан шоссе çулĕ тăрăх 6,5 километр малалла кайнă та Уффенгейм тата Рудольцхофен хулисене йышăннă.

Союзниксен танковăй чаçĕсем, 1.500 çынна тыткăна илсе тата трофейсем тытса илсе, Крайльсхейм районĕнче пăртак каялла чакнă. Союзниксен Вюртембергри Кохер шывĕ çинчи укреплениве 5 километра çити аслăлатнă. Союзниксен Неккар шывĕ çинчи икĕ укреплениĕ пĕрлешнĕ. Карлсруэ хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре союзниксем 5 километр малалла кайнă. Союзниксен Энц шывĕ хĕрринчи Пфорцгейм хулинчен хĕвелтухăçнерехри укреплениве аслăлатнă. Апрелĕн 10-мĕшĕнче союзниксем 25.846 çынна тыткăна илнĕ.

Рур «миххи» районĕнче союзниксен пехота чаçĕсем Эссен хулипе тăшмантан тасатнă, Гельзенкирхен тата Бохум хулисене кĕрсе кайнă. Вестфалири Мешеде хулинчен хĕвеланăçнерехре союзниксем Фрейеноль хулине йышăннă. Зиген хулинчен çурçĕртерехри районра наступлени туса пыракан союзниксен пехота чаçĕсем Аттендорф хулине йышăннă. Союзниксен танковăй чаçĕсем Зигбург хулинчен çурçĕртерехре пăртак малалла кайнă.

Йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем истребительсем хўтĕлесе пынипе Регенсбургри нефтехранилищĕне, боеприпассен складне, аэродрома тапăннă, çавăн пекех Ингольштадтри аэродромпа чугун çул деповне, Крайбургри взрыв тăвакан япаласен заводне, Мюнхенран хĕвеланăçнерехри Фрейгам хулинчи нефтехранилищĕпе боеприпассен складне тапăннă.

Вăтам бомбардировщиксем тата истребитель-бомбардировщиксем Эмден, Бремен, Гамбург тата Ганновер районĕнчи чугун çул объекчĕсене тапăннă.

Вăтам тата çăмăл бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем Кетен, Цвикау хулисенчи чугун çул деповĕсене тата Бамберг хулинчи автомашинăсен заводне тапăннă.

Апрелĕн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле çăмăл бомбардировщиксем Берлин хулине тапăннă.

Совет Союзĕпе договор тунă май Белград хулинче пулса иртнĕ митингсемпе демонстрацисем

БЕЛГРАД, апрелĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Белградри пур хаçатсем та паян пĕррремĕш страницăра Совет Союзĕпе Югослави пĕр-пĕринпе туслăн, пулăшасси, пĕр-пĕрне пулăшасси тата вăрçă хыççăн пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси çинчен тунă договора тата договор çинчен пĕлтернине пичетлесе кăларнă.

«Политика» хаçат пĕррремĕш страницăра Сталинпа Молотов юлташсен тата Тито Маршалăн ўкерчĕкĕсене пичетлесе кăларнă.

Хулара çав тери хавхаланни палăрать. Договор çине алă пусни çинчен калакан хыпара илтсенех, чылай вырăнсенче митингсем пулса иртнĕ.

Каçхине Совет Союзĕпе договор тунă пирки хула халăхĕн йышлă демонстрацийĕ пулса иртнĕ. Митингра Югославин промышленность министрĕ Хебранг, Сербин çĕрĕç министрĕ Смилянич тата Бакич полковник сăмах тухса каланă. Халăх вĕсене тăвăллăн алă çупса йышăннă. Сталин Маршала, Хĕрлĕ Çара тата Совет халăхне саламланисем илтĕннĕ. Митинг хыççăн демонстрантсен колонни Совет посольствин çурчĕ патне кайнă. Манифестацире пулнă çынсем Совет Союзĕпе Югослави договор тунă пирки савăннине палăртнă, Совет Союзне хĕрўллĕн саламланă.

ФРАНЦИРЕ ТĂШМАНА ХИРĔÇ ТĂРСА КĔРЕШЕКЕН ХАЛĂХ СОВЕЧĔН ПРОГРАММИНЕ ПУРНĂÇЛАССИШĔН КĔРЕШНИ

ПАРИЖ, апрелĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Юлашки икĕ эрне хушшинче халăх ирĕклĕхĕн департаментсенчи комитечĕсем хăйсен ларăвĕсенче вăхăтлăх правительствăн пуçлăхĕ мартăн 2-мĕшĕнче каланă сăмаха тата çĕршыва ертсе пыракансем Консультаци ассамблейи ларăвĕнче каланисене сўтсе яваççĕ. Çав комитетсем йышăнакан резолюцисенче правительство тăшмана хирĕç тăрса кĕрешекен халăх совечĕн программине шута илмен пирки пăшăрханаççĕ.

Тури Гаронна департаментĕнчи ирĕклĕх комитечĕ çапла каланă: «Тăшмана хирĕç тăрса кĕрешекен юхăма пула хăйĕн вырăнне йышăннă правительство тăшмана хирĕç тăрса кĕрешекен халăх совечĕн программине пурнăçа кĕртме тытăнманнишĕн комитет пăшăрханать. Комитет Консультаци ассамблейинчен правительствăна Халăх совечĕн программине пурнăçа кĕрттерме ыйтать, сăмахран, производствăпа суту-илў хатĕрĕсене (энерги çăлкуçĕсене, çĕр айĕнчи пуянлăха, страховой компанисене тата банксене) халăха каялла тавăрса парассине пурнăçа кĕртме ыйтать... Правительство кирлĕ реформăсене хăюллăн туса пытăр, сăмахран, трестсене пĕтерессине пурнăçлатăр»...

Çакăн пек резолюцисене халăх ирĕклĕхĕн вуншар комитечĕсем йышăннă, хăшпĕр департаментсенче вĕсене вырăнти тата кантонсенчи ирĕклĕх комитечĕсен ассамблейисем те йышăннă.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

ЛОНДОН, апрелĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешўллĕ командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерўре çапла каланă: апрелĕн 9-мĕшĕнче Америка çарĕсем Сулу архипелагĕнчи Джоло утравĕ çине аннă, çав утравăн тĕп хулине тытса илнĕ те халĕ Сулу архипелагне пĕтĕмĕшпех контроллесе тăраççĕ. (Çак архипелаг шутне темиçе пĕчĕк утрав кĕрет, вĕсем Филиппин утравĕсен кăнтăр пайĕпе Борнео утравĕн çурçĕр çыранĕ хушшинче лараççĕ).

Луссон утравĕн (Филиппин утравĕсем) кăнтăр пайĕнче японецсем организованнă хирĕç тăрса çапăçма пăрахнă.

ВАШИНГТОН, апрелĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС) США-н Лăпкă океан çинчи флочĕн штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Америка пехотин чаçĕсем Окинава утравĕнчен 10 миля хĕвелтухăçнерехри Цуген утравне йышăннă.

ЛОНДОН, апрелĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешўллĕ командованийĕн штабĕ пĕлтерпине парать. Пĕлтерўре каланă тăрăх, Америка çарĕсем хăвăрт малалла куçса пыраççĕ, Лусон утравĕн кăнтăр пайне японецсенчен тасатаççĕ.

ВАШИНГТОН, апрелĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Лăпкă океан çинчи США флочĕн штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Окинава утравĕн кăнтăр пайĕнче японецсем хирĕç тăрса çапăçнине пула фронт линийĕ нимĕн те улшăнман пекех.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, апрелĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерўре çапла каланă: Италире, Адриатика секторĕнче, 8-мĕш армин чаçĕсем апрелĕн 9-мĕшĕнче каçхине наступлени пуçласа янă. Наступлени умĕн авиаци вăйлăн атакăланă. Союзниксен çарĕсем Сенио шывĕ хĕрринче сарлака фронтра тăшман оборонине татнă. 8-мĕш армин малти чаçĕсем чылай секторсенче 3,5 километр ытларах малалла кайнă, Сенио шывĕнчен çурçĕртерехре, Болонья хулинчен 25 миля кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре Луго, Фузиньяно тата Котиньола хулисене, нимĕçсен оборонин паха пункчĕсене тытса илнĕ. Американецсен 5-мĕш армийĕн чаçĕсем, тăшман вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе, Масса хулине—нимĕçсен оборонин Ливурн çыранĕ хĕрринчи Специ хулинчен 17 миля кăнтăртарахра ларакан паха узелне—тытса илнĕ те çурçĕр-хĕвеланăçнелле малалла куçса пыраççĕ.

РЕСПУБЛИКĂРИ МТС-сем ТРАКТОРСЕМПЕ ВĔСЕНЧЕН КĂКАРСА ĔÇЛЕМЕЛЛИ МАШИНĂСЕНЕ ЮСАМАЛЛИ ПЛАНА 1945 ÇУЛХИ АПРЕЛĔН 10-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

(процентпа)

МТС-сем	Тракторсем юсанă	Трактор плугĕсене юсанă	Сеялкăсем юсанă	Культиваторсем юсанă
Елчĕк	100	100	100	100
Шăхасан	100	100	100	100
Йĕпреç	100	100	100	100
Комсомольски	100	100	100	100
Чкаловски	100	100	100	92,8
Ишлей	100	94,0	100	100
Красноармейски	100	92,8	100	100
Вăрнар	100	91,8	100	100
Элĕк	100	84,7	93,3	100
Канаш	100	83,3	85,0	94,4
Куславкка	100	85,3	75,0	90,0
Çĕрпў	100	85,3	83,3	75,0
Хĕрлĕ Чутай	100	73,0	76,9	88,8
Сĕнтĕрвăрри	100	70,8	66,6	85,7
Вăрмар	100	71,9	70,0	35,0
Шупашкар	100	76,9	71,4	30,7
Шăмăршă	100	68,2	78,5	58,6
Тăвай	100	94,1	92,8	72,6
Улатăр	96,3	50,0	50,0	78,9
Çĕмĕрле	95,8	96,1	76,9	87,5
Сĕнтĕр	94,8	74,0	75,0	84,6
Сурмайдан	92,5	90,2	80,0	100
Калинино	92,0	92,0	60,0	50,0
Кувакино	90,3	65,3	100	73,6
Етĕрне	83,8	86,4	66,6	90,9
Первомайски	69,5	50,0	40,0	60,0
Октябрьски	66,6	85,1	30,0	20,0
Слява	65,3	32,0	60,0	75,0
Пăрачкав	55,5	61,4	53,8	76,1

Çуракине хатĕрленсе çитрĕмĕр

Чăваш республикинчи ялхуçалăх работникĕсем чĕнсе каланине сўтсе-явнă хыççăн «Комбайн» колхозри колхозниксем çуракине хатĕрленсе ирттерес тĕлĕшпе социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç.

Халĕ кашни бригадăна ялхуçалăх инвентарĕсем, акмалли çĕр лаптăкĕ çирĕплетсе патăмăр.

Кăçалхи çул кашни гектартан 100 пăтран кая мар тĕштырă туса илес тесе, колхозниксем ырми-канми ĕçлесе уйхире 3.200 лав тислĕк кăларчĕç, 50 центнер кĕл, 35 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухрĕç. Плугсем, сўресем, лашасене кўлмелли хатĕрсем юсавлă. Çуракине хатĕрленес ĕçре М. Матвеев ертсе пыракан бригада малта пырать. В. Степанов, 72 çулхи ватă колхозник, 104 центнер урпа тасатса акма хатĕрлерĕ.

Хирти ĕçсене вăхăтра тата ăнăçлăн ирттерес ĕçре туртăм вăйĕ пысăк вырăн йышăнать. Çавна шута илсе, эпир ĕç лашисене капма тăратрăмăр, вĕсене кашни куллен 3-шер килограмм сĕлĕ, 15 килограмм утă паратпăр. 8 вăкăра ĕçе вĕрентсе, вĕсемпе ака вăхăтĕнче усă куратпăр.

Кăçалхи çуракинче пирĕн пурĕ 280 гектар акса хăвармалла. «Комбайн» колхозри колхозниксемпе колхозницăсем тырпула кĕске вăхăтра тата пысăк пахалăхпа ака хăварма хатĕр тăраççĕ.

И. МОКЕЕВ.
Етĕрне районĕнчи «Комбайн» колхоз председателĕ.

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ ЛАША КЎЛСЕ ĔÇЛЕМЕЛЛИ ЯЛХУÇАЛĂХ МАШИНИСЕНЕ ЮСАМАЛЛИ ПЛАНА 1945 ÇУЛХИ АПРЕЛĔН 10-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

(процентпа)

Районсем	Плугсене юсанă	Сеялкăсене юсанă
Вăрнар	88,2	100
Вăрмар	96,2	78,6
Елчĕк	90,1	100
Етĕрне	92,6	70,8
Ишлей	100	95,3
Йĕпреç	58,3	75,0
Калинино	94,8	92,1
Канаш	73,4	42,5
Куславкка	67,5	72,8
Комсомольски	96,1	100
Красноармейски	89,9	100
Кувакино	88,3	78,2
Муркаш	89,2	100
Октябрьски	76,6	100
Первомайски	100	57,0
Пăрачкав	61,5	100
Сĕнтĕрвăрри	91,7	88,8
Сĕнтĕр	95,9	93,0
Советски	64,3	59,4
Çĕрпў	68,4	98,3
Çĕмĕрле	61,5	100
Тăвай	72,7	76,3
Улатăр	87,0	88,0
Хĕрлĕ Чутай	73,3	100
Чкаловски	100	76,6
Чурачăк	100	95,0
Шупашкар	100	80,7
Шăхасан	58,9	72,8
Шăмăршă	97,7	88,8
Элĕк	65,9	80,0

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—25, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

ФТ 02062. Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000